**Январĕн 12-мĕшĕ – РФ прокуратура ĕçченĕсен кунĕ**

# Саккунлăхпа йĕркелĕх хуралĕнче




Январĕн 12-мĕшĕнче уйрăмах паллă кун. Çав кун эпир Раççей прокуратурине йĕркеленĕренпе 285 çул çитнине паллă тăватпăр. Юлашки çулсенче пухнă опыт пĕчĕк мар. Вăл вара, право патшалăхне туса хунă тапхăрта, питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Раççей прокуратури çак пысăк çĕршывра унăн интересĕсене хÿтĕлет, саккунсене пăхăнассишĕн пурте пĕр пекех ответлă пулнине çирĕплетсе парать.

Прокуратура – кирек епле преступленишĕн те айăплама тивĕçлине пĕлтерекен тĕслĕх. Вăл саккуна пăсакансене саккунлăх чи çÿллĕ шайра пулнине пĕлтерсе тăрать. Ытларах чухне шанăça çухатнисем шăпах кунта тĕрĕслĕх тупаççĕ.

Прокуратурăна пулăшу ыйтса килекенсен йышĕ çултан-çул ÿссе пырать. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ çынсене хăйсен саккунлă прависене хÿтĕлеме майсем туса парать. Прокуратура органĕсем вара ку тĕлĕшпе пулăшса пыраççĕ. Иртсе кайнă çулталăк преступленисене уçса парассинче кăна мар, çĕршывăн пĕрлĕхлĕ саккун йĕркелĕхне туса хурассинче те прокуратура ĕçченĕсен вырăнĕ епле пысăк пулнине яр уççăн кăтартса парĕ.

Промышленность тата ял хуçалăх предприятийĕсен ĕçлекенсем умĕнчи ĕç укçи парăмĕсене татассине кăна илер. 2006 çулта прокуратура хăйĕн тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçланине пула ĕç укçи парăмĕсене 70 процент таран чакарма май килчĕ, парăмлă предприятисен хисепĕ 12-рен 5-е юлчĕ. Пĕтĕмĕшле парăмсем те 3,9 миллион тенкĕрен 1,1 миллион тенкĕне юлчĕç. Вăрттăнлăх мар, административлă мелсемпе те усă курма тиврĕ. 33 ертÿçĕне административлă майпа айăпланă, ĕçлекенсене хÿтĕлесе 457 заявлени суда ярса панă.

Вырăнти саккун акчĕсене федераллă саккунсемпе шайлаштарни патшалăх позицине çирĕплетмелли мел пулса тăрать. Иртнĕ çул кăна вырăнти самоуправлени органĕсен йышăнăвĕсем пирки 113 протест тăратнă.

Унччен пекех, район прокуратури тупса палăртнă çитменлĕхсемпе йăнăшсене тÿрлетесси çине пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Пĕтĕмпе 400-е яхăн представлени тăратнă. Çавна май саккуна пăсакан должноçри çынсене дисциплинарлă тата административлă майпа айăплама тиврĕ. Кун пекки 247 тĕслĕх пулнă. Иртнĕ çулах граждансене административлă майпа айăпланин 48 тĕслĕхне саккунлă мар тесе пăрахăçланă.

Хальхи вăхăтра прокуратурăн тĕп тивĕçĕ правăна хÿтĕлесси, приоритетлă наци проекчĕсене пурнăçа кĕртме майсем туса парасси, право сыхлавĕн органĕсен преступленисемпе кĕрешессинчи, уголовлăй ĕçсене уçса парассинчи, коррупципе кĕрешессинчи ĕçне лайăхрах йĕркелесе пырасси пулса тăрать.

Паллă ĕнтĕ, çынсен право тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕ кирлĕ шайра мар. Юридици пулăшăвĕ илессипе те татса паман ыйтусем çук мар. Кун пек чухне шăпах ĕнтĕ прокуратура органĕсем çынсен саккунлă интересĕсене хÿтĕлекенсем пулса тăраççĕ.

Çитсе килекен професси уявĕ ячĕпе прокуратура ĕçченĕсемпе ветеранĕсене çирĕп сывлăх, служба тивĕçĕсене пурнăçланă çĕрте ăнăçусем, район çыннисен прависемпе интересĕсене хÿтĕлес ĕçре принциплăх сунатăп. Сирĕн çемьесенче ăнăçупа килĕшÿ хуçаланччăр.

**С. ФИРСОВ,**
**район прокурорĕ.**

**Çур аки пирки паянах шутласан аван пулмалла**

# Техникăна шанчăклă юсаса хатĕрлесчĕ

Вăхăтăн тикĕс хумĕне пырса сисмерĕмĕр те, 2006 çул хыçа юлчĕ, кун таврăннă май 2007 çул хăйĕн утăмне шутлама пуçларĕ. Акă, кун тăршшĕ 25 минут хушăнчĕ, кунсерен вăл татах пысăкланса пырĕ. Сисмĕпĕр те, ума çур аки çитсе тăрĕ. Вăхăтăн çак утăмĕнче хамăр умри куллен пурнăçламалли вак-тĕвек ĕçсемпе çул айккинче тăрса юлмăпăр-и? Çĕр ĕçĕпе пурăнакан кашни çыннах ку ыйту ыран мар, паян шухăшлаттармалла, ахальлĕн...

Умра 2007 çулăн анлă ани сарăлса выртать. Пирĕн паянхи тĕллев – унта тухса иртнĕ çулхинчен ÿсĕмлĕрех ĕç тăвасси. Сăмахăма малалла тăснă май малтанах çакна каласа хăваратăп: çĕр ĕçĕнче техника пĕлтерĕшĕ ÿсрĕ. Çĕнĕ технологисен тытăмĕнче те вăл тĕп вырăнта. Иртнĕ çул та çĕр ĕçченĕсем выльăх-чĕрлĕх апатне фермăсем патне турттарассине пĕтĕмпех техника вăйĕпе пурнăçларĕç. Фермăсенче пухăннă тислĕке хире кăларса тăрас ĕçре те тракторсем малти вырăнта пулчĕç. Висĕм çулхи кĕркунне çĕртме сухи туман нумай хуçалăхсен пĕлтĕрхи çур акире çурхи культурăсене сухаласа акмалла пулса тухрĕ. Çĕр ĕçĕн тути-масине пĕлекен кашни çын çакнашкал ĕçлени мĕнешкел çухатусем патне илсе пынине ăнланать. Çав вăхăтрах кĕрхи çĕртме сухине хаклакан хуçалăхсем ăна та вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçлас ĕçре техникăна мала тăратрĕç, ĕçсене вăхăтра пурнăçларĕç. Анчах нумай хуçалăхсенче кĕрхи çĕртме сухине япăх пахалăхпа сухаласа хăварнине çурхи тырăсене акас умĕн çĕре икшер хут та кăпкалатмалла пулса тухрĕ. Ăнланатпăр, ку каллех хушма тăкак.

“Симĕс ĕç çире” те, вырмара та иртнĕ çул техника малти ретре пулчĕ. Кĕр кунĕсенче “хир карапĕсем” иртнĕ хыççăн юлнă улăма та хуçалăхсен ĕçченĕсем техника вăйĕпе пуçтарса купаларĕç. Кĕр акире те техника хăй шанăçне май çитнĕ таран тÿрре кăларчĕ. Нимĕн те висеçĕр мар теççĕ те, çапла вара çу кăçипе пĕр ĕçрен те пăрăнса юлман техника вăйĕ те хавшарĕ. Паян эпир çитес çур акине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерсе кĕлетĕмĕрсене татах пуянлатас тетпĕр пулсан, ял хуçалăх техникине хĕл кунĕсенче тĕпрен юсаса ăна вăй хушса пама тивĕç. Çак яваплă та питĕ кирлĕ ĕçе пурнăçлама, ман шутпа, паян-ыранах кÿлĕнмелле. Ахальлĕн кая юлсан каю шăтать.

Паянхи куна техникăна юсаса çур акине хатĕрленес ĕçсем хуçалăхсенче еплерех пулса пыраççĕ-ха? Çак ыйту çине хурав шыраса хаçата çыру çыриччен эпĕ районти икĕ хуçалăхра пулса куртăм. Хуçалăхĕсем юнашаррисемех пулин те, пĕри начаррисен шутĕнче, тепри вара экономика аталанăвĕпе районта кăна мар, республикăра та малтисен йышĕнче. Апла-и, капла-и, анчах техникăна юсаса çур акине хатĕрленес ĕçсем хальлĕхе икĕ хуçалăхĕнче те савăнтарсах каймаççĕ. Кăçалхи хĕл кунĕсем сивĕпе пуянах мар пулсан та, иккĕшĕнче те юсав мастерскойĕсен юсав ĕçĕсене пурнăçлама сивĕ. Çавна пула ĕнтĕ механизаторсем тимĕрçĕ цехĕнче ăшăнса ларса хаклă куна усăсăр ирттереççĕ. Кăна курсан çакă куç умне тухать: мастерскойсенче ăшă пулсан, унти ĕç условийĕсене тăтăшах йĕркелесе тăрсан, ĕçлекенсене ĕç хушма та, вĕсенчен çирĕпрех ыйтма та пулать. Ку вара пулас тухăçпа, хуçалăх экономикин тĕреклĕхĕпе çыхăннă.

Çул çÿрев çакна кăтартрĕ: икĕ хуçалăхра та арканнă-ваннă техникăна юсама мастерскойсене хатĕрлемен. Унăн пĕтĕмлетĕвĕ – çурмалла усă алăксенчен çилтăман вĕçтерсе кĕни. Акă мĕн каласа пачĕç мана ырă ятпа палăрса тăракан хуçалăхри (ятне палăртмах нуши çук тесе шутлатăп, вулакан хăех ăнланĕ) механизаторсем:

– Пирĕн юсав мастерскойĕ юсав ĕçĕсене технологи ыйтнă пек пурнăçлама хатĕр мар. Паянхи кăткăс техникăна кĕрĕк тăхăнса тата алсипе юсама пулмасть. Пирĕн механизаторсем хушшинче мастерскойри сивĕре ĕçлесе инвалид пулса юлнисем те, пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнисем те пулчĕç. Мастерскойне мĕншĕн ăшăтмастăр тесе ыйтсан, хуçалăх ертÿçи ĕçлемесĕр ан ларăр, ĕçлесен ăшăнатăр, тет.

Пытарма çук, çак сăмахсенче механизаторсен ĕçлес кăмăлĕ те, хуçалăх ертÿçипе специалистсен явапсăрлăхĕ те куç умне тухать. Çак “тăрăшулăх” кайран уйсем япăх сухаланнине, вĕсем йăранланса кайнине, йăранлă анасем çинче ĕçлесе комбайнсем çĕр çине тырă нумай тăкса хăварнине çаврăнать. Çакă хуçалăх экономикине малалла яманни пуриншĕн те паллă.

Уйсем йăранланса кайнин сăлтавĕ мĕнре-ши? Хам çĕр ĕçĕнче нумай ĕçленĕрен, маншăн вăл вăрттăнлăх мар. Çакăн пек пулăм сăлтавĕ вăл пĕтĕмпех юсавра суха пуççене кирлĕ пек юсаса регулировка туманнинче. Эпĕ хăй вăхăтĕнче трактор бригадин бригадирĕ пулнă май, ял хуçалăх техникине çур акине юсаса хатĕрлессине нумай ĕçлерĕм. Çавăнпа та механизаторсене хамăн ĕç опычĕпе паллаштарас тетĕп. Юсавран тухнă плугăн çакăн пек пулмалла: пĕрремĕшĕ, отвалсен хушши пурин те пĕр виçеллĕ кирлĕ; иккĕмĕшĕ, отвалсен çÿлти пайĕ пĕр пек тÿрĕ пулмалла; виççĕмĕшĕ, плугăн вырнаçтарнă лемехĕсен пурин те тÿрĕ йĕрпе вырнаçмалла. Пĕр пек тÿрĕ пулмасан, плугăн рами авăнма пултарать. Ăна тимĕрçĕ цехĕнче хĕртсе тÿрлетмелле. Маларах асăннă ĕçсене пурне те технологие пăхăнса пурнăçласан, плугсем сийĕ тÿрелĕ, комбайнсем те хире хальхи пек тырă нумай тăкса хăвармĕç.

Çакна та каласа хăварас килет. Техникăна япăх юсанипе вăл ĕçе вăхăтра тухаймасть, тухсан та нумай ĕçлеймест. Çавна пула ĕнтĕ хирте тислĕк куписем темиçешер çул çум курăк плантацийĕ пулса лараççĕ, хирте салатса пăрахнă тислĕк уйăхĕпе типсе выртса хăйĕн пахалăхне çухатать. Кайран айăплисене “çÿлте” шыратпăр. Çав вăхăтрах агротехникăпа килĕшÿллĕн салатса пăрахнă тислĕке çийĕнчех сухаласа çĕр айне тумалла. Ку вăл – тыр-пул валли çителĕклĕ азот никĕсĕ.

Çакă та тарăн шухăшлаттарать. Эпир ĕçленĕ вăхăтра гусеницăллă тракторсем çулталăк хушшинче 2600 гектар ĕç пурнăçлатчĕç пулсан, паян – 300 гектар. Мĕншĕн çапла? Хуравĕ çиелтех: мĕншĕн тесен паянхи кăткăс техникăна юсав технологине пăхăнса юсама условисем çук – мастерскойсенче сивĕ.

Юлашкинчен хытарсах çакна каласа хăварас килет. Сивĕ хĕл кунĕсенче мастерскойсене ăшăтассине пĕрремĕш ыйту тумалла. Юсама пыракан механизаторсем ăшă пÿлĕме ĕçе кĕччĕр. Çакă çур акине пахалăхлă ирттересси çине витĕм кÿрет. Çакăнтан пуçланать те уй-хир тухăçĕ.

**Вячеслав ИВАНОВ.**
Кашмаш ялĕ.

**Çын ĕçпе хисеплĕ**

# Ĕмĕрне ахаль ирттермен

**Тĕрленчĕк**

Пурнăç пурăнасси уй урлă каçасси мар. Çул çинче вара чăрмавĕ-тумхахĕ тупăнсах тăрать. Йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса суйласа илнĕ çулпа çирĕппĕн малалла утасси кашни çынран хăйĕнчен нумай килет.

Ырă йăла-йĕркесем, хăнăхусем ăруран ăрăва куçса пыраççĕ. Вăрçă хыççăн çуралнă çынсем уйрăмах чăтăмлăхпа палăрса пыраççĕ, умри чикĕсене çĕнтерсе, малтан мала кайса хисепе тивĕçеççĕ.

Çакăн пек çынсенчен пĕри – А.И. Михайлов. Александр Иванович кăçалхи январĕн 5-мĕшĕнче 60 çул тултарчĕ. Вăл Патăръел районĕнчи Каншен ялĕнче учитель çемйинче çуралнă. Ытти тантăшĕсем пекех унăн та ачалăхĕ çăмăл пулман. Мал ĕмĕтлĕ çамрăк йывăрлăхсем умĕнче нихçан та пуçне усман. 1969 çулта А. Михайлов Мари Республикинчи Йошкар-Олари политехника институтне пĕтерет. Ун хыççăн пĕр тапхăр Коми АССР-ĕнчи Кайгоротски вăрман хуçалăхĕнче тĕп лесничи пулса тăрăшать.

Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне те тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Александр Иванович хĕсметре çар службинче пулать. Унтан таврăнсан та, кирек ăçта пулсан та, шаннă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Малтанах Пĕтĕм союзри “Леспроект” пĕрлешĕвĕн Ульяновск облаçĕнчи экспедицийĕнче инженер-таксатор пулса тимлет. Пултарулăхне кура ăна 1973 çулхи август уйăхĕнче Шупашкарти топсбыта куçараççĕ. 1975 çулхи август уйăхĕнчен тытăнса паянхи кун та директор пулса тăрăшать.

Хăйĕнчен çирĕп ыйтакан, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăракан, пысăк пĕлÿллĕ, анлă тавракурăмлă çын, кирек ăçта ĕçлесен те, коллективра яланах хисепре пулнă. Çакна вăл илнĕ наградăсем уççăн çирĕплетеççĕ. Акă, сăмахран, 1999 çулта вăл «РФ топливăпа энергетика комплексĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ. «Чăваш Республикин промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята пани те, Хисеп грамотисем те А.И. Михайлов пултарулла специалист пулни çинчен калаççĕ.

Ĕçре яланах тимлĕ пулса тăрăшнине пирĕн район çыннисем лайăх пĕлеççĕ. Хальхи пек çут çанталăк газĕ малтанах кашни килте тенĕ пекех пулман. Предприятисене, организацисене, фермăсене те хĕллехи вăхăтра çĕр кăмрăкĕ хутса ăшăтнă. Александр Иванович çĕр кăмрăкĕ пурин патĕнче те çителĕклĕ пултăр тесе нумай вăй хунă, йывăр вăхăтра яланах пулăшнă.

Чунĕпе юратнă ĕçе парăннăскер, Александр Иванович обществăлла тивĕçсене пурнăçлассинчен те пăрăнман. Шанăça кирек хăçан та тÿрре кăларма тăрăшнă. Вăл 10 çул хушши Чăваш Республикин топливо промышленноçĕн управленийĕн коллегийĕн членĕ, ЧР “Чувашрессовпроф” профсоюз организацийĕн пĕрлешĕвĕн канашĕн членĕ, вăрман отраслĕнче ĕçлекенсен республикăри профсоюз комитечĕн президиумĕн членĕ пулнă. Унсăр пуçне Совет Союзĕнчи профсоюзсен съезчĕн делегачĕ, 2000 çулта РФ вăрман отраслĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн 3 съезчĕн делегачĕ пулма тÿр килнĕ ăна.

Ятлă çынна коллективра саваççĕ, хисеплеççĕ. А.И. Михайлов “11-мĕш пилĕк çуллăх ударникĕ” паллăна, РФ профсоюзĕсен федерацийĕн, РФ Топливăпа энергетика министерствин Хисеп грамотисене те тивĕçнĕ.

Коллективра ертсе пыма пултарни, ĕçе йĕркелеме пĕлни ертÿçĕшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Александр Ивановича вара ку тĕлĕшпе нихăш енчен те ÿпкелеме май çук. Çакна пĕр тĕслĕхпе кăна çирĕплетес килет.

Шупашкар ГЭС-не пĕвеленĕ чухне çĕнĕ база туса лартса ăна шыв айне пулакан зонăран куçарассишĕн те вăй-халне шеллемен вăл, çак ĕçе тивĕçлипе йĕркелеме пултарнă.

Хăйĕн ĕмĕрне ахаль пурăнса ирттермен А.И. Михайлов. Паянхи нумай çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Хăйсен отраслĕнчи коллективсемшĕн те, пирĕн районшăн та ырă наставник вăл. Утмăл çул тултарчĕ пулин те, унра çирĕп вăй-хал тапса тăрать.

Апла пулсан татах та нумай çулсем хушши пурăнма ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçусем сунар ăна. Пур çĕрте те хисепле çынна килĕшÿпе ăнланулăх пулăшса тăччăр.

**А. КУДРЯШОВ, М. ПУШКИН, В. ЛЮБИМОВА, Б. САПОЖНИКОВ, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем.**

**Килти хушма хуçалăх**

# Кăркка мĕнле кайăк вăл?

**Кашни хĕл пуçламăшĕнчех кăçал кăркка усраманнишĕн кулянатăп, анчах усрама хăратăп. “Питĕ ачаш кайăк, вĕсене пăхма йывăр”, – теççĕ. Чăнах та, мĕнлерех кайăк вăл?**

Кăркка пур енчен те кăмăла каймалла кайăк. Чи малтанах вăл килте усракан кайăксенчен чи пысăкки, вăтамран 20 кг таран çитĕнет, 30-35 кг таран çитĕннĕ тĕслĕхсем те пур. Амисем аçисен çуррине яхăн (35-50 процент) çăмăлрах. Кăрккасене ÿсен-тăрансем çинчен сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене çимешкĕн хăнăхтарма пулать.

Чăхсемпе танлаштарсан, вĕсене ирĕкрех пÿлĕмсем, курăклă вырăнсем, белоксемпе пуян апатсем ытларах кирлĕ. Кăркка чĕпписем малтанхи 9 эрнере чăнах та питĕ ачаш. Çакă вĕсене пăхмашкăн чи йывăр вăхăт. Вĕсене тытакан вырăнта питĕ ăшă та типĕ пулмалла.

Енчен те кăркка чĕпписене амăшĕ ларса кăларчĕ пулсан, вĕсене икĕ эрнене çитмесĕр курăк çине кăлармалла мар. Кăларнă чухне çĕр типĕ, сывлăш температури 20 градусран кая мар ăшă пулмалла. Çанталăк кирек мĕнле улшăннă вăхăтра та вĕсене тарса пытанмалли хÿтлĕх хатĕр пулмалла.

Çамрăк чĕпĕсем питĕ час çухалса кайма пултараççĕ. Апла ан пултăр тесен вĕсене шыв тата апат савăчĕсене çутă, лайăх курăнакан вырăнсене лартса памалла. Вĕсен рационĕ витаминлă тата белоклă апатсемпе пуян пулмалла.

Кăркка чĕпписемшĕн чи пысăк хăрушлăх вăл – сулхăн çанталăк. Вĕсене майĕпен хăнăхтарса пымалла. Мĕн чухлĕ аслăрах, çанталăк çавăн чухлĕ сулхăнрах пулмалла. Малтанхи икĕ кунĕнче вăл 28-30, чĕпĕсем 31-60 кунта чухне 18-20 градус пулмалла.

Чĕпĕсене амăшĕсĕр çитĕнтернĕ чухне ĕçме, çиме хăнăхтармалла. Вĕсене сăмсисемпе апата сăхма вĕрентме апат хурса панă хăмана майĕпен пÿрнесемпе шаккамалла, ĕçме вĕрентмешкĕн сăмсисене шыв ăшне чикмелле. Апат çине çăмарта хушсан чĕпĕсем çиме часрах хăнăхаççĕ.

Кăркка чĕпписем тырă е кукуруза çăнăхне, тăпăрчăна, пĕçернĕ çăмартана, турăха тата çамрăк симĕс курăка юратса çиеççĕ. Çут тĕнчене тухнăранпа 10 кун çитсен вĕсене вĕтĕ чул, вĕтетнĕ шăмă тата хăш-пĕр апат-çимĕç юлашкийĕсене параççĕ. Вĕтетнĕ шăмăсем вĕсемшĕн кальципе фосфор çăл куçĕ пулса тăраççĕ.

Кăркка çитĕнтересси йывăр-и? Хăраса ÿкмелле кăткăс мар. Вăл темле пулсан та хăйне пăхнă хака каларать. Çакна тутлă та техĕмлĕ аш çинĕ чухне пит аван туятăн. Тĕкĕпе те килти хуçалăхра питĕ вырăнлă усă курма пулать.

**Н. ЗАХАРОВ.**